ЫРĂ ПУЛĂМ

# «Юрă вĕрентекен пекех»


Автора саламлаççĕ.

**Ака уйăхĕн 11-мĕшĕнче юрă-ташă ăстисем, кĕнеке вулама юратакансем, шкул ачисем Упири кану центрне Земфира Яковлевăн «Тури чăвашсен музыка фольклорĕ» çĕнĕ кĕнекине хак пама пухăнчĕç. Уява пирĕн ентеш, Чăваш наци библиотекин тĕп специалисчĕ, Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн ертÿçи, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Вера Архипова ертсе пычĕ.**

Кам-ха вăл Земфира Яковлева? Земфира Фондеркина-Яковлева 1939 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнчи Сорăм ялĕнче çĕр çине килнĕ. Канашри педагогика училищинчен, Хусанти патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Канашри педучилищĕн музыка, дирижер, методика, педагогика, хорпа юрлас уйрăмĕсен преподавателĕнче вăй хунă. Виçĕ çул Шупашкарти педагогика училищинче ĕçленĕ. Земфира Кузьминична арçын ачасен хорне, ачасен «Пейĕт» фольклор ансамблне йĕркеленĕ.

1993 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçлеме пуçланă. Земфира Яковлева доцент тăрăшнипе аслă шкулта студентсен «Сипет» ансамблĕ йĕркеленнĕ. Чылай çул Шупашкар округĕнчи «Çĕньял» фольклор ансамблне ертсе пынă. 2020 çулта Чăваш наци библиотекин илемлĕ литературăпа искусство пайĕ çумĕнче «Эткер» фольклор студине уçнă.

Çак тапхăрта вăл 40 ытла пособипе статья пичетлесе кăларнă. Унăн «Кĕрхи тĕрленчĕксем», «Чĕресем пулсан вĕри», «Юрататăп хам Чăваш çĕрнех», «Чĕрери юррăма шăратса» хăй кĕвĕленĕ юрăсен кĕнекисем тухнă. Ăна вулакансем педагог, фольклорист, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, Раççейри халăха вĕрентес ĕç отличникĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Енри композиторсен ассоциацийĕн членĕ пулнипе аван пĕлеççĕ.

…«Тури чăвашсен музыка фольклорĕ» кĕнеке хаклавне килнисем малтан Упири кану центрĕпе, вулавăшпа, этнографи кĕтесĕпе паллашрĕç. Зала пухăнсан Земфира Кузьминична сăмах илчĕ.

«Вăрçă ачи эпĕ, – терĕ вăл. – Атте парти райкомĕнче ĕçленĕ, район хаçачĕн редакторĕнче тăрăшнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан фронта кайнă, Латви çĕрĕнче пуç хунă. Анне те пур çĕрте те хастарлăхпа палăрнă. Коллективизаци тапхăрĕнче комсомолка пулнă. Фермăра ĕçленĕ, уй-хир бригадине ертсе пынă. Вăл питĕ юрлама юрататчĕ. Çавăнпа эпĕ Сорăм хутлăхĕн юррисене итлесе çитĕннĕ. Пирĕн ял 130 çул каялла пулса кайнă. Ăна Элĕк, Муркаш тăрăхĕсенчен куçса килнĕ çынсем никĕсленĕ. Пирĕн енче питĕ хитре юрăсем упранса юлнă. «Уяв» ансамбль ертÿçи Зинаида Козлова 1986 çулта аннепе иксĕмĕр шăрантарнă 30 ытла юрра çырса илчĕ. «Эсĕ фольклор тĕнчинче пурăнатăн. Ушкăн мĕншĕн йĕркелеместĕн? Санăн ку ĕç аван пулмалла», – терĕ.

Зинаида Алексеевнăн сăмахĕсем хавхалантарчĕç. «Пейĕт» фольклор ушкăнĕпе ĕçленĕ май аннерен хамăр тăрăхра сарăлнă юрăсене çырса илтĕм. Каярахпа вĕсем «Сорăм юррисем» кĕнекере пичетленчĕç. «Лайăх юрă чăн-чăн вĕрентекен пекех», – теççĕ.

Земфира Кузьминична Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçленĕ вăхăтра студентсемпе тăтăшах фольклор экспедицийĕсене тухса çÿренĕ. 1997 çулхи çĕртме-утă уйăхĕсенче Шупашкар, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Элĕк, Муркаш, Красноармейски тата Вăрнар округĕсене çитнĕ. Вĕсем çав вăхăтра пухнă юрăсем «Тури чăвашсен музыка фольклорĕ» кĕнекере вырăн тупнă.

Красноармейски округĕн культура тытăмĕнче чылай çул ĕçленĕ Рена Осипова шăп çав ушкăнра вĕреннĕ. Рена Михайловна çав тапхăра ăшшăн аса илчĕ, Земфира Кузьминичнăна тав сăмахĕ каларĕ, чечек çыххи парнелерĕ. «Трак енре чылай пурăнтăмăр. Пире Упи вăтам шкулĕн интернатне вырнаçтарнăччĕ», – терĕ Земфира Яковлева.

Земфира Кузьминична çĕнĕ кĕнекене хăйĕн 85 çулхи юбилейĕ тĕлне хатĕрлесе çитерчĕ. «Кăларăм 16 пайран тăрать. Кĕреке, вăйă, ут çи, вăрман, улăх, улах, Çăварни, салтак, туй, ĕç, Çĕпĕре куçса каякансен, çăпата, кĕпер тăвакансен, ытти юрă. Вĕсене хăш вырăнта, камран çырса илнине, кам юрланине палăртнă», – каласа кăтартрĕ автор.

Кĕнекери юрăсене «Эткер» фольклор ансамблĕ шăрантарчĕ. «Той, той, той тесе», «Тăхăр тирлĕ тăлăпне», «Ан, ан, шăллăм, ут çинчен» юрăсене куракансем уйрăмах ăшшăн йышăнчĕç. «Трак ен» халăх фольклор ушкăнĕ /ертÿçи – Антонина Никонорова/ юрланă хайлавсене те – «Матьшу пусси», «Мăнкун килет мăн çолпа», «Ух, ухлатса тăманийĕ», «Вир пушмак», «Чĕннĕ çĕре кайма лайăх» юрăсене – итлеме кăмăллă пулчĕ.

Фольклор уявне килнисене Трак енри тĕп вулавăшăн методикăпа библиографи секторĕн заведующийĕ Ольга Николаева, Владимир Серафимов тавра пĕлÿçĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Иван Матвеев, Трак енри историпе тавра пĕлÿ музейĕн ĕçченĕ Валентина Тихонова, Упири кану центрĕн менеджерĕ Сергей Петров, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Елена Константинова, Трак енри Н.Янкас ячĕллĕ пĕрлĕх ертÿçи Иван Прокопьев, Роза Деменцовăпа Юрий Борисов журналистсем саламларĕç.

Уява килнисем Земфира Кузьминична чăваш халăхĕн этнокультура пуянлăхне чĕртсе тăратас, сыхласа хăварас тата аталантарас енĕпе тĕрлĕ енлĕ ĕçленине палăртрĕç. Çакна палăртма кăмăллă: вăл ку таранччен халăхра анлă сарăлнă 800 ытла юрă çырса илнĕ.

Кану центрĕнче çавăн пекех Чăваш наци библиотекин ĕçченĕсем хатĕрленĕ «Тăван ăс-хакăла – тăван ен сассисем» экспозици ĕçлерĕ. Земфира Кузьминична хăйĕн çĕнĕ кăларăмне Трак енри библиотекăсене парнелерĕ.

Сăмах май, кăçал Земфира Яковлева çак ушкăнпа хăйĕн çĕнĕ кĕнекине кĕнĕ юрăсене çырса илнĕ ытти округа çитсе курасшăн.

**Юрий БОРИСОВ.**

Вера АРХИПОВА архивĕнчи сăн ÿкерчĕк.